27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
19
ВЫРСАРНИКУН
228(6723) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

1944 ҫулхи ноябрӗн 19-мӗшӗ, №225. Мускав, Кремль.

Юлташсем — Совет артиллерийӗн артиллеристсемпе минометчикӗсем, инженерӗсемпе техникӗсем, офицерӗсемпе генералӗсем!

Паян совет ҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар артиллерийӗн кунне уявлаҫҫӗ.

Паян пӗтӗм ҫӗршыв Хӗрлӗ Ҫар артиллерийӗ питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ, вӑл Хӗрлӗ Ҫарӑн вырса ҫапмалли тӗп вӑйӗ пулса тӑнине палӑртать.

Ҫакӑ паллӑ: артиллери вӑл Ленинград патне тата Мускав патне тӑшмана малалла кайма чарна Хӗрлӗ Ҫара пулӑшнӑ вӑй пулнӑ.

Артиллери вӑл Хӗрлӗ Ҫара Сталинград патӗнче та Воронеж патӗнче, Курскпа Белград патӗнче, Харьковпа Киев патӗнче, Витебскпа Бобруйск патӗнче, Ленинград патӗнче, Минск патӗнче, Яссыпа Кишинёв патӗнче нимӗҫ ҫарӗсене аркатса тӑкма пулӑшнӑ вӑй пулнӑ.

Хӑватлӑ вут-ҫулӑм тӑкса, артиллери Отечественнӑй вӑрҫӑри чи вӑйлӑ ҫапӑҫусенче пехотӑпа танксене ӑнӑҫлӑн ҫул уҫса панӑ, ҫакна пула Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫӗрӗнчен хӑваласа кӑларнӑ.

Хальхи вӑхӑтра совет артиллерийӗ, пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле кӗрешсе, Германие ҫӗнтерессипе пыракан юлашки татӑклӑ ҫапӑҫусенче тӑшман ҫыннисене, техникине тата укрепленийӗсене аркатмалла пыра-пыра ҫапать.

Ҫакна пурте пӗлеҫҫӗ: Совет артиллерийӗ [illegible] ҫапӑҫу хушшинче [illegible] Тӑван ҫӗршыв [illegible].

Ҫак ҫӗнтерӳ вӑл пирӗн ҫӗршыв [illegible] пулса тӑрать.

Юлташсем — совет артиллерийӗн артиллеристсемпе минометчикӗсем, инженерӗсемпе техникӗсем, офицерӗсемпе генералӗсем! Сире Артиллери кунӗ ячӗпе салам калатӑп!

Хӗрлӗ Ҫар артиллерийӗ Отечественнӑй вӑрҫӑра тунӑ татӑклӑ ҫӗнтерӳсене палӑртас тесе, ҪАПЛА ХУШАТӐП:

Паян, ноябрӗн 19-мӗшӗнче, Артиллери кунӗнче, 19 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столицинче — МУСКАВРА, союзлӑ республикӑсен столицисенче тата Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре, Одессӑра, Хабаровскра, Новосибирскра, Свердловскра, Горькийре, Молотовра, Тулӑра хулисенче, артиллеристсене [illegible] пӗрер хут персе, пирӗн чаплӑ артиллеристсене хамӑр Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют памалла.

Совет артиллерийӗ хамӑр Тӑван ҫӗршыв [illegible] малашне те сывӑ та тӗрӗс-тӗкел пурӑнтӑр!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

Совет артиллерийӗн кунӗ

Совет ҫыннисен чӗрисем аслӑ савӑнӑҫпа тулчӗҫ. Темиҫе кун каярах пӗтӗм тӗнче, пирӗн пӗтӗм аслӑ ҫӗршыв Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революцин 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Аслӑ ҫулпуҫӑн тӗрӗс те уҫӑ сӑмахӗсем совет ҫыннисен чӗрине яланлӑхах кӗрсе вырнаҫрӗҫ. Сталин юлташ пирӗн ҫӗршыва яланлӑхах фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатса ҫитерни ҫинчен калани пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх савӑнӑҫлӑ хыпар пулса саланчӗ. Ҫак савӑнӑҫлӑ кунсенче пирӗн Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарне, унӑн Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Маршалне И. В. Сталина чысласа мухтать. Пирӗн халӑх ҫакна лайӑх пӗлсе тӑрать: мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар полкӗсем тунӑ ҫӗнтерӳсенче совет артиллерийӗ те сахал мар вырӑн йышӑнса тӑрать, вӑл пирӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗн ветӗнчи хӑватлӑ ҫарсенчен пӗри пулса тӑрать.

Отечественнӑй вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенче пирӗн артиллеристсем нимӗҫ танкӗсен кӗтӗвӗсене малалла кайма чарса тӑчӗҫ. Нимӗҫ захватчикӗсене Ростов тата Мускав патӗнче ҫӗмӗрсе тӑкнӑ ҫӗрте, нимӗҫсене икӗ ҫарне Сталинград патӗнче пӗтерсе тӑкнӑ ҫӗрте, тӑшманӑн Миус шывӗ ҫинчи ҫирӗплетнӗ оборонине ҫӗмӗрнӗ ҫӗрте, Ленинграда блокадӑран хӑтарнӑ ҫӗрте, нимӗҫсен Белоруссири, Балтика тӑрӑхӗнчи, Прут шывӗ ҫинчи оборонине аркатнӑ ҫӗрте сталинла артиллери ҫав тери пысӑк вырӑн йышӑнчӗ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан Отечественнӑй вӑрҫӑн мӗнпур фрончӗсенче Хӗрлӗ Ҫар артиллерийӗ ҫапӑҫура тава тивӗҫлӗ пысӑк ӗҫсем тунине шута илсе, пирӗн ҫӗршывра ҫулсерен ирттермелли праҫник—артиллери кунӗ тунӑ. Вӑл праҫнике ҫулсеренех ноябрӗн 19-мӗшӗнче уявласа ирттерӗҫ.

Совет артиллерийӗн праҫникӗ пирӗн ҫӗршывшӑн чаплӑ та асран каймн кун пулса тӑрать. Икӗ ҫул каярах, ноябрӗн 19-мӗшӗнче, мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар Сталинград патӗнче наступлени пуҫарса янӑ. Наступлени пуҫланиччен малтан совет артиллерийӗ, хӑйӗн хӑватлӑ вӑйӗпе тӑшманӑн ҫирӗплетнӗ вырӑнӗсене аркатса, хамӑрӑн ҫарсем валли ҫул уҫса панӑ. Хӗрлӗ Ҫар тӑшман ҫарӗсене ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Сталинград патӗнче фашистсен суйласа илнӗ икӗ ҫарне ҫӗмӗрсе тӑкрӗ, румынсен, итальянецсен, венгерсен ҫарӗсене аркатса тӑкрӗ тата хӑватлӑн пырса ҫапса, нимӗҫсене Атӑл патӗнчен Терек патне ҫити 600—700 километр таран хӑваласа ячӗ. 1942—1943 ҫулсенчи хӗллехи кампани пӗтӗм вӑрҫӑ ӗҫӗнче улшӑну тапхӑрӗ пулса тӑчӗ. Унтанпа пуҫарулӑх пӗрмаях пирӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен аллинче тӑрать.

Совет ҫӗршывӗ хӑйӗн хӑватлӑ артиллерийӗпе тивӗҫлипе савӑнса мухтанать. Совет артиллерийӗ тӑшман артиллерийӗнчен нумай малта тӑрать. Пирӗн промышленноҫ, уйрӑмӑнах вӑрҫӑ ҫулӗсенче, партипе правительство тимлӗн тӑрӑшнипе пула, артиллери вооруженийӗсене туса кӑларассине 6—7 хут ӳстерчӗ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революцин 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ историллӗ докладра «Халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн танксем, тупӑсем, самолетсем нимӗҫ ҫарӗнничен сахалтарах мар, нумайрах», тесе каланӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче артиллеристсен чаплӑ кадрӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, вӗсем хӑйсене хӗрӳллӗ ҫапӑҫусенче мухтава кӑларчӗҫ. Тупӑсен наводчикӗсем, артиллери батарейисен командирӗсем хушшинче орденлӑ чӑваш халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем те сахал мар.

Мускав патӗнче пынӑ ҫапӑҫусенче чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ майор Павел Лаптев чапа тухнӑ. Ана Тӑван ҫӗршыв Совет Союзӗн хисеплӗ ятне панӑ. Совет Украинишӗн, Днепршӑн пынӑ ҫапӑҫусенче Улатӑрти комсомолец Валентин Ветвинский, Кувакино районӗнчи колхозник пулнӑ Филипп Ахаев, Советски районри Издеркино ялӗнчи колхозник К. Алексеев, вӑрҫӑччен учитель пулса ӗҫленӗ Иван Индряков тата Мидхат Салихов чапа тухнӑ. Вӗсене пурне те Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ. Пирӗн землякем гварди генерал-майорӗ И. Макаров тата полковник В. Воскресенский юлташсем те артиллери чаҫӗсенче ӳссе пиҫӗхнӗ. Вӗсен ҫар мастерлӑхне, пултарулӑхне Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ приказӗсенче икшер хут палӑртнӑ.

Польша ҫеҫенхирӗсемпе Карпат тӑвӗсем патӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссипе Венгри территорийӗнче те пирӗн землякӗсене — артиллеристсене курма пулать. Вӗсем вырӑссемпе, украинецсемпе, белоруссемпе тата Совет Союзӗнчи ытти халӑхсемпе пӗрле тӑшмана хӑватлӑн пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Наводчик ефрейтор Андреев 9777-мӗш номерлӗ тупӑпа Ленинград патӗнче пенӗ, халӗ вӑл ҫав тупӑпа нимӗҫ захватчикӗсене Тукумспа Либава хушшинче перет. Пирӗн земляк батарея командирӗ Александр Зубов та мухтавлӑ ҫула утса тухнӑ. Хӑйӗн батарейипе вӑл тӑшмана Ҫурҫӗр Кавказра аркатнӑ, Ставрополь ҫӗрне, Ростов облаҫне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешнӗ, нимӗҫсен Миус шывӗ ҫинчи оборонине ҫӗмӗрнӗ ҫӗрте пулнӑ. Кӑҫал ҫулла ҫӗнтерӳ ҫулӗ ӑна Балтика тӑрӑхӗнчи ҫӗршыва илсе пынӑ. Унӑн чаплӑ ӗҫӗсене Тӑван ҫӗршыв виҫӗ хутчен наградӑланипе паллӑ тунӑ.

Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн паттӑр артиллерисчӗсене нихӑҫан та манмӗ.

Пирӗн республикӑри рабочисемпе инженерсем, колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен землякӗсен паттӑр ӗҫӗсене хастарлӑн ӗҫленипе саламлаҫҫӗ. Шупашкар ҫынни инженер Михаил Бундин. конструкторсен бюровӗнче ӗҫлесе, ҫӗнӗ йышши тупӑсем тунӑ ҫӗре активлӑн хутшӑнать. Унӑн чаплӑ ӗҫне сталинла премн парса хакланӑ.

Ҫулсеренех «Артиллери кунне» ирттермелле туни совет артиллерийӗ тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳсене совет халӑхӗ пысӑка хурса хакланине кӑтартса парать. «Артиллери кунӗ» — пӗтӗм совет халӑхӗн праҫникӗ, пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫарӑн праҫникӗ.

Паян совет республикисен пур столицисенче те тата ҫавӑн пекех Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре, Одессӑра, Хабаровскра, Новосибирскра, Свердловскра, Горькинче, Молотовра тата Тулӑра совет артиллерийӗн ҫак чаплӑ праҫникне артиллерирен персе салют панипе паллӑ тӑваҫҫӗ. Совет халӑхӗ «вӑрҫӑ туррине»— совет артиллерине тата ӑна тӑвакана аслӑ Сталина мухтаса чыслать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 17-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Венгрире тӑшманпа ҫапӑҫса ФЮЗЕШАБОНЬ хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта йышӑннӑ. Вӑл шутра ГУТА, САЛИ, МАКЛАР, КАРАЧОНД, АДАЧ, ДЬЕНДЬЕШХАЛАС, ЧАНИ, ЯС-ФЕНИСАРУ, ЖАМБОК ятлӑ пысӑк ялсем тата ТИССА-ЛУЦ, МАКЛАР, КАРАЧОНД, ХАЛАСАРАНВОШ, ЯСФЕНЬСАРУ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче улшӑнусем пулман.

Ноябрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 16 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 44 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирӗн ҫарсем ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Фюзешабонь хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ. Ку хула Будапешт хулипе Мишколц хули хушшинчи ҫул ҫинче ларать, вӑл тӑшман оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулнӑ. Нимӗҫсем, ҫапӑҫӑва ҫӗнӗ чаҫсем кӗртсе ярса, хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ. Гитлеровецсен контратакисене сире-сире ярса, пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынӑ, хулана виҫӗ енчен ҫавӑрса илнӗ те тӑшман гарнизонне хӗстерсе лартнӑ. Унтан вара, пыра-пыра ҫапса, нимӗҫсемпе венгерсен чаҫӗсене аркатса тӑкнӑ. Тӑшмана хӑваласа пырса, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта тытса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшмана пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. 1.000 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ. 13 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсенчен 11 хир туппи, 32 пулемет, 14 миномет, гусеницӑллӑ 5 трактор тата боеприпас склачӗ тытса илнӗ. Нимӗҫсемпе венгерсен 500 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

Ҫанталӑк юсанмине пула, авиаци вӑйлӑ ҫапӑҫма пуҫланӑ. Пирӗн штурмовиксемпе бомбардировщиксем тӑшманӑн ҫапӑҫури ретӗсене тата ҫапӑҫу хирне пыракан резервӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем кун каҫиччен нимӗҫсен 36 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пӗр участокра пирӗн разведчиксем тӑшман пехоти пухӑнма пуҫланине асӑрханӑ. Совет минометчикӗсем вӑйлӑн пеме тытӑннӑ. Минӑсем питӗ тӗл пыра-пыра ӳкнӗ. Гитлеровецсене нумайӗшне пӗтерсе тӑкнӑ, ыттисем тарса пӗтнӗ. Пирӗн летчик-штурмовиксем Хӗвелтухӑҫ Пруссири пӗр пысӑк ялта тӑшман автомашинисемпе пехоти пухӑнса тӑнине асӑрханӑ. Совет летчикӗсем нимӗҫсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ, кайран вӗсене тупӑсемпе тата пулеметсемпе пенӗ.

* * *

Варшавӑпа юнашар ларакан Прагӑран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсем, ҫапӑҫу пуҫласа ярса, пирӗн ҫарсем епле вырнаҫса тӑнине пӗлме хӑтланнӑ. Гитлеровецсен отрячӗсене пирӗн малти позицисем патне пынӑ чухнех сапаласа янӑ. Пӗр чаҫри артиллеристсем 5 кун хушшинче тӑшманӑн 6 туппине пӗтерсе тӑкнӑ тата персе тӑракан вунӑ вырӑна пусарса лартнӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтра тӗрлӗ участоксенче советсен разведка отрячӗсем кӗрешнӗ. Пирӗн разведчиксем тӑшман ҫарӗсем мӗнле вырнаҫса тӑнине пӗлсе килнӗ, гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, хӑшне-пӗрне тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн карапӗсем Балтика тинӗсӗн кӑнтӑр пайӗнче тӑшманӑн хурал карапне шыва путарнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 252-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ салтак Жорж П. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ Страсбург хулинче ҫуралса ӳснӗ француз. Иртнӗ тӗнче вӑрҫинче ман атте Франци ҫарӗнче служит тунӑ. Вӑл нимӗҫсене хирӗҫ паттӑрӑн кӗрешнӗ, ҫапӑҫусенче хӑюллӑ пулнӑшӑн ӑна виҫӗ медаль парса наградӑланӑ. Эпӗ икӗ ҫул хушши Германире ирӗксӗр ӗҫре пурӑнтӑм. 1944 ҫулхи июнь уйӑхӗн юлашки кунӗсенче мана ирӗксӗр нимӗҫсен ҫарне илчӗҫ. Эпӗ нимӗҫсене чунтан кураймастӑп. Гитлерла Германи Францире кӳнӗ асапа пӗр француз та манас ҫук, мана тивӗҫлӗ те мар, тесе шутлатӑп эпӗ. Темиҫе вунӑ пин француза гестапо тӗрмисенче асаплантарса вӗлернӗ е пере-пере пӑрахнӑ. Эльзасран темиҫе пин ҫемьене Польшӑна хӑваласа кайрӗҫ, ҫавӑнтанпа вӗсем ҫинчен пӗр хыпар та ҫук. Нимӗҫсем пире асаплантарчӗҫ, пирӗнтен мӑшкӑлласа кулчӗҫ, пирӗн ҫын тивӗҫӗпе халӑх тивӗҫне мӑшкӑлларӗҫ. Эпӗ нимӗҫсене хирӗҫ вӑрҫасшӑн, вӗсене Франци тӳссе ирттернӗ асапа хуйхӑшӑн тивӗҫлипе тавӑрасшӑн. Эпӗ нимӗҫсене вӗсем мана хӑйсем валли ирӗксӗр ӗҫлеттернӗшӗн, унтан тата нимӗҫ мундирне тӑхӑнтартса, нимӗҫ ҫарне илнӗшӗн тавӑрасшӑн. Нимӗҫсен заводӗнче ӗҫленӗ чухне эпӗ советсен тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисемпе тата фашистсен чуралӑхне ирӗксӗр илсе кайнӑ мирлӗ граждансемпе туслашрӑм. Нимӗҫсен ҫарне илсен, эпӗ вырӑссем енне куҫма ҫирӗп шут тытрӑм».

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Хӗрлӗ Ҫар артиллерийӗн маршалӗсемпе генералӗсене Суворов орденӗпе наградӑласси ҫинчен

Ҫапӑҫусене пӗлсе тата хастарлӑн ертсе пынӑшӑн тата Ҫапӑҫури ҫара артиллери хӗҫпӑшалӗпе боеприпассем парса тӑрас тӗлӗшпе Верховный Главнӑй Командовани панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн ҫаксене наградӑлас:

1-мӗш степень СУВОРОВ орденӗпе

1. Артиллерин Главнӑй Маршалне Николай Николаевич Воронова.
2. Артиллери генерал-полковникне Василий Иванович Казакова.
3. Артиллери генерал-полковникне Николай Михайлович Хлебникова.
4. Артиллери Маршалне Михаил Николаевич Чистякова.
5. Артиллери Маршалне Николай Дмитриевич Яковлева.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи ноябрӗн 18-мӗшӗ.

Де Голль генерал Мускава килесси ҫинчен

Ноябрь уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин пуҫлӑхӗпе де Голль генералпа Совет Союзӗн Францири Посолӗ А. Е. Богомолов хушшинче калаҫу пулса иртнӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Совет Правительстви де Голль генерала Мускава килсе кайма чӗннӗ. Чӗнӳре ҫапла каланӑ:

Совет Союзӗн Францири Посолӗпе А. Е. Богомоловпа калаҫнӑ чухне Франци республикин Вӑхӑтлӑх Правительствин Председателӗ де Голль генерал Совет Союзне килсе кайма кӑмӑл пурри ҫинчен каланине шута илсе, СССР Правительстви де Голль генералӑн кӑмӑлне ырлать, ӑна Совет Союзне килсе кайма чӗнет. Де Голль генерал Совет Союзне Совет Правительствин руководителӗсемпе тӗл пулса калаҫма килет.

Совет Правительстви чӗннине де Голль генерал йышӑннӑ. (ТАСС).

ВЦСПС-ра

1944 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче ВЦСПС Президиумӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Ларура профсоюзсен Тӗп Комитечӗсен председателӗсем те пулнӑ. ВЦСПС председателӗ В. В. Кузнецов юлташ совет профсоюзӗсен делегацийӗ Англие кайса килни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Ҫав делегаци Англипе совет профсоюзӗсен комитечӗн 4-мӗш сессийӗнче пулса ӗҫленӗ тата Британи тред-юнионӗсен 6-мӗш конгресӗсенче пулнӑ.

ВЦСПС Президиумӗ делегаци ӗҫне ырланӑ. ВЦСПС секретариатне чи пысӑк хуласенче профсоюзсен активӗн пухӑвӗсене ирттерме палӑртса хума хушнӑ. Ҫав пухусенче совет профсоюзӗсен делегацийӗ Англие кайса килни ҫинчен докладсем туса памалла. (ТАСС).

МУСКАВРИ ВАСКАВЛӐ ПУЛӐШУ СТАНЦИЙӖ 25 ҪУЛ ТУЛТАРНИ

Ноябрӗн 14-мӗшӗнче Мускавра Мускаври васкавлӑ пулӑшу станцийӗ 25 ҫул тултарнине паллӑ туса ирттернӗ.

Чирлесе ӳкнӗ е аманнӑ ҫынсене вырӑнтах квалификациллӗ медицина пулӑшӑвӗ памашкӑн ҫав станцин пур хатӗрсем те пур. Медицина пулӑшӑвӗ панӑ ҫынсенчен 96 проценчӗ сывалса ӗҫе тытӑннӑ. Хальхи вӑхӑтра Мускавра васкавлӑ пулӑшу станцийӗн 7 подстанцийӗ пур. (ТАСС).

КОЛХОЗ ГИДРОЭЛЕКТРОСТАНЦИЙӖ ТОК ПАНА

Тула облаҫӗнчи Заокски районри Шкирятов ячӗпе тӑракан колхозра гидроэлектростанци туса пӗтернӗ. Колхозниксен темиҫе ҫӗр ҫуртне, ялсоветне, вулав ҫуртне, библиотекӑна электричество ҫути ҫутатса янӑ. Ҫав станци армана та энерги парать.

Кӳршӗри Сталин ячӗпе тӑракан колхозри ҫуртсене, учрежденисене тата предприятисене те электричество кӗртеҫҫӗ.

(ТАСС).

Артиллерин Главнӑй Маршалӗ Н. Н. Воронов

Совет Союзӗн Геройӗ артиллерист Иван Индряков

Вӑрҫӑччен Иван Индряков Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Хӗрлӗ Ҫыр ялӗнче пуҫламӗш шкулта учитель пулса ӗҫленӗ. Унӑн ача чухнехи пурнӑҫӗ тата ҫамрӑклӑхӗ те савӑнтах иртнӗ.

Иван Индряков нумай вуланӑ, ӑна граждӑн вӑрҫин геройӗсен паттӑрлӑхӗ хумхантарнӑ. Анчах та вӑл ҫар ҫынни пулма шутламан, учитель пулса, хӑйӗн пӗтӗм ӗмӗрне ҫамрӑк ӑрӑва воспитани панӑ ҫӗрте ӗҫлесе ирттерме шут тытнӑ.

Тӑшман пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫине вӑрҫӑпа тухсанах Иван Индряков Хӗрлӗ Ҫар ретне кайнӑ. Ҫапӑҫу хирне вӑл 1941 ҫулта кӗнӗ. Ҫав вӑхӑтранпа хӑйӗн аллинчен хӗҫпӑшал пӑрахман. Пилӗк хутчен аманнӑ Иван Индряков. Анчах сывалнӑ хыҫҫӑн яланах Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекенсен ретне таврӑннӑ. Ҫапӑҫусенче пулса, вӑл хӑйӗн пӗлӗвне ӳстернӗ, вӑрҫӑ техникине алла илнӗ. Унӑн ячӗ Белоруссири хаяр ҫапӑҫусенче чапа тухнӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн мухтавлӑ полкӗсем, Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташӑн приказне пурнӑҫа кӗртсе пырса, тӑшмана хӑватлӑн пыра-пыра ҫапнӑ. Старши лейтенант Иван Индряков ертсе пыракан батарея та тӑшман пуҫӗ ҫине вут-ҫулӑм тӑкнӑ. Тӑшман каялла чакса пынӑ. Ҫакӑ вӑл Хӗрлӗ Ҫар воинӗсене тулли кӑмӑлпа савӑнтарнӑ, паттӑррӑн ҫапӑҫма вӑй-хӑват панӑ.

Старши лейтенант Иван Индряковӑн биографийӗ тӗлӗнмелле эпизодсемпе пуян. Вӑл эпизодсем совет офицерӗн пултарулӑхӗпе хӑюлӑхӗ пысӑк пулнине уҫӑмлӑн кӑтартса параҫҫӗ.

...Старши лейтенант Иван Индряков бинокльпе хӑйӗн тупписем мӗнле пенине сӑнанӑ. Унпа юнашар, пысӑк мар окопра, телефонист ларнӑ. Вӑл батарея командирне Иван Индрякова тупӑсенчен мӗнле пени ҫинчен пӗлтерсе тӑнӑ.

Совет артиллерисчӗсен пӗр батарейи тӑшманӑн икӗ батарейине хирӗҫ вут-ҫулӑм тӑкса тӑнӑ. Батарея командирӗ Иван Индряков опытлӑ артиллерист пулнӑ. Унӑн батарейи ҫинчен пехотинецсем «хӑюллисен батарейи» тесе каланӑ. Пехотинецсене ҫапӑҫура пулӑшма Индряков батарейин артиллерисчӗсем пырасси ҫинчен пӗлтерсен, вӗсем яланах:

— Индряков пирӗнпе пулсан, ҫӗнтеретпӗр. Вӗсем хӑюллӑ ҫамрӑксем, тӗл переҫҫӗ, — тенӗ.

Ҫапӑҫура хӑюллӑ, чӑтӑмлӑ пулма Иван Индряков хӑй вӗрентсе пынӑ. Унӑн батарейи, пехотӑран пӗр утӑм юлмасӑр пырса, пӗтӗм йывӑрлӑхсене тӳссе ирттернӗ.

Командир Иван Индряков тӑшмана йышпа мар, пӗлнипе пыра-пыра ҫапать,—ҫакӑ пулать унӑн ӗҫӗн тӗп пахалӑхӗ.

Тӑшман хӑйӗн икӗ батарейинчен персе тӑрса, пирӗн пехотӑна малалла куҫса пыма чӑрмантарни ҫинчен пӗлтернӗ хыҫҫӑн та Иван Индряков ним хумханмасӑр:

— Пӗтеретпӗр вӗсене, юлташсем,—тенӗ.

Часах тӑшман батарейисем вырнаҫнӑ ҫӗре темиҫе снаряд пырса ӳкнӗ. Сӑнамалли пунктран вара ҫапла пӗлтернӗ:

— Тӑшман батарейисене пӗтерсе тӑкнӑ!

Батарея командирӗ бинокльпе тӑшман туппИсем вырнаҫнӑ ҫӗре сӑнанӑ те сержант Воронов ертсе пыракан тупӑ расчетне, хӑйӗн вырӑнӗнчех юлса, кӗтсе тӑма хушнӑ.

Инҫетре мар йывӑҫ тӗмисем патӗнче тупӑ сасси илтӗнчӗ. Унтан снаряд ҫурӑлнӑ. Сывлӑш хумӗпе батарея командирне ҫӗр ҫине ывӑтса пӑрахнӑ. Йывӑҫ тӗмӗсем патӗнчен тӳрремӗн тӗллесе, нимӗҫсем тупӑпа персе тӑнӑ. Сержант Воронов ҫав самантрах команда панӑ. Тупӑ чӗтресе сиксе илнӗ, тӑшман туппи патӗнче хура тӗтӗмӗн юпи ҫӗкленнӗ. Иван Индряков Воронов патне чупса пынӑ та тав туса унӑн аллине чӑмӑртанӑ. Вара вӗсем иккӗшӗ тӑшман туппи ларнӑ ҫӗре чупса кайнӑ. Тупӑ сывӑхӗнче тӑшман салтакӗсен виллисем сапаланса выртнӑ. Пӗр ҫын та тарайман унтан. Индряковпа Воронов тӑшман туппине нимӗҫсем ҫинелле ҫавӑрнӑ та вӗсем ҫине снаряд хыҫҫӑн снаряд яма пуҫланӑ.

— Пӑхӑр-ха, ку тупӑ та фрицсене лайӑх пӗҫертет, — тесе кӑшкӑрнӑ батарея командирӗ, тӑшман ҫине снаряд хыҫҫӑн снаряд янӑ май.

Ҫав вӑхӑтра лейтенант Медник, батарея патӗнче Индряков вырӑнне юлнӑскер, хӑйӗн командирне пулӑшма шут тытнӑ. Вӑл тупӑсене тӑшман позицийӗ патне сывӑхарах илсе пырса, вӑрманӑн кӑнтӑрти хӗррине персе тӑма пуҫланӑ. Артиллерирен вӑйлӑн персе тӑнӑ хыҫҫӑн артиллеристсем те пехотӑпа пӗрле нимӗҫсене хӑвалама тытӑннӑ.

Пӗр сехетре тӑшман батарейисене пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман туппИсем тӑнӑ вырӑнта нимӗҫ салтакӗсен виллисем сапаланса выртнӑ.

Ҫак кӗске ҫапӑҫура старши лейтенант Иван Индряков артиллерисчӗсем тӑшманӑн икӗ туппине тата пӗр тягач тытса илнӗ, тӑшманӑн 30 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Кун пек ҫапӑҫусенче Иван Индряков виҫӗ ҫул хушшинче нумай хутчен пулнӑ.

СССР Верховный Совечӗн 1944 ҫулхи августӑн 22-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте Командованин заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн старши лейтенант Иван Васильевич Индряков юлташа Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ. Иван Васильевич Индряков кӑкӑрӗ ҫинче халӗ Ленин орденӗ, 1-мӗш степенлӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Хастарлӑхшӑн» медаль ялкӑшса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш халӑхӗ хӑйӗн ывӑл-хӗрӗсен паттӑр ӗҫӗсемпе тулли кӑмӑлпа савӑнса мухтанать.

Ҫӗнӗ пӳрт лартса панӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Чамыш» колхозра Л. Михайлова колхозницӑн ывӑлӗ фронтра ҫапӑҫать. Хӑй вӑл килте пӗччен пурӑнать. Унӑн пӳрчӗ ҫӗрсе, юрӑхсӑра тухнӑ. Колхоз ӑна ҫӗнӗ пӳрт лартса панӑ. Ҫапла вара, фронтовик амӑшӗ Михайлова Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революцин 27 ҫул тултарнӑ уява ҫӗнӗ пӳртре савнӑҫлӑн кӗтсе илнӗ.

Вунӑ ҫул письмоносецра

СЕНТЕРВАРРИ. Шӗнерпуҫ ялсоветӗнчи «Наука Ленина» колхоз членӗ Ф. Астрова тата Упакасси ялсоветӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ И. Порфирьев, 60-шар ҫултан иртнӗ пулин те, хӑйсен ӗҫӗсене тӑрӑшса туса пыраҫҫӗ. Астрова юлташ 10 ҫул, Порфирьев юлташ 6 ҫул письмоносецра ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хаҫат-журналсене, ҫырусене пӗр ҫухатмасӑр хуҫисем патне ҫитереҫҫӗ.

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисем

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1944 çулхи бюджетне 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен калакан

ЗАКОН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1944 çулхи бюджетне 9 уйăх хушшинче мĕнле пурнăçа кĕртнин отчетне тупăшсем енĕпе 114.793,8 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 106.651,0 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

2. Çак постановленин 1-мĕш статьине килĕштерсе, Чăваш АССР-ĕн республика бюджетне пурнăçа кĕртнин отчетне тупăшсем енĕпе 31.658,6 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 27.115,7 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

3. Районсемпе хуласен бюджетне пурнăçланине тупăшсем енĕпе 71.364,4 пин тенкĕ чухлĕ, расходсем енĕпе 66.160,5 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

4. Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ 1944 çулхи бюджета 9 уйăх хушшинче çителĕклĕ пурнăçа кĕртменнине палăртать тата Халăх Комиссарĕсен Советне 1944 çулхи бюджета пĕтĕмпех пурнăçа кĕртес, Чăваш АССР-ĕн бюджетĕнче палăртнă тăрăх культурăпа хуçалăх ĕçĕсем валли укçа вăхăтра та çителĕклĕ парса тăрас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма хушать.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ Халăх Комиссарĕсемпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленисен начальникĕсем пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетесси

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн çак Указĕсене çирĕплетес:

Семен Трофимович Митряшова Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен;

Григорий Самсонович Федотова СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен;

Максим Никитич Галанцева Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Çулйĕр управленин начальникĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен;

Иван Тихонович Братчикова Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен;

Анна Ивановна Воронцовăна Чăваш АССР Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартасси çинчен.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас тĕлĕшпе ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем мĕнле ĕçлени çинчен

Чăваш АССР-ĕн Верховный Совечĕ çакна палăртать: фронтовиксен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пирĕн çĕршывра калама çук тимлĕн пăхаççĕ, вĕсемшĕн Совет государстви тата халăх питĕ тăрăшаççĕ.

Чăваш АССР-ĕнче 1944 çулхи 9 уйăх хушшинче кăна çар çыннисен çемьисене 55.312 пин тенкĕ, инвалидсене 10.448 пин тенкĕ пенсисемпе пособисем панă, ялхуçалăх налогĕ тĕлĕшпе 66 пин çемьене, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе 65 пин çемьене çăмăллăхсем панă, 27 пин çемьене ыгла пахча-çимĕç лартса ӳстерме çĕр лаптăкĕсем панă, 13 пин çемьене çĕрулми тата пахча-çимĕç вăрлăхĕсем парса пулăшнă. 1943—1944 çулсенче çар çыннисен 21 пин çемьине 26.438 пуç выльăх панă. Укçа фончĕсенчен 1.733 пин тенкĕ укçа тата тырпул фончĕсенчен 139 пин пăт сăнăхпа тĕштырă панă.

1944 çулта планран иртгерсе 1.893 гектар тĕштырă акнă тата çĕрулми лартнă. Çав çĕр çинче пухса илнĕ тырăпа çĕрулми пĕтĕмпех çар çыннисен çемьисене пулăшмалли фонда каять.

Колхозсен 19 ача çуртĕнче тăлăха юлнă 367 ача вĕренсе ӳсеççĕ. Ача сачĕсен хисепне чылай ӳстернĕ. фронтовиксен ачисем валли столовăйсем уçнă. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем валли инвалидсен çуртĕсем, кану çуртĕсем уçнă, ĕçлеме пултаракан инвалидсенчен 94 процентне ĕçе вырнаçтарнă.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ çапах та çапла шутлать: çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене государство енчен пулăшу парас тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха.

Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсенче ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполкомĕсемпе вĕсен отделĕсем СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче «Вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи çар çыннисен çемьисене пособисем пама палăртмалли тата пособисем парса тăмалли йĕрке çинчен» йышăннă Указне пăсаççĕ. Вĕсем пособисемпе пенсисене памалла тăвас ĕçе вăхăтра тата тĕрĕс тумаççĕ, вĕсене çав çемьесене вăхăтра тӳлемеççĕ тата законсăр тӳлеме пăрахаççĕ.

Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе вырăнти Советсем пурте мар-ха çителĕклĕ тăрăшаççĕ. Çавна пула Чăваш АССР-ĕнче 1.450 çынна ĕçе вырнаçтарман, çав шутран Çĕмĕрле районĕнче 437 çынна ĕçе вырнаçтарман.

Наркомместпром тата РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкооператци управленийĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйĕ çар çыннисен çемьисен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен япалисене юсамалли мастерскойсен ĕçне начар организациленĕ. Республикăра сăран ата-пушмак тума планран ытлашши чĕртаварсем пур, çавсен запасĕсемпе усă курмаççĕ.

Чăваш АССР-ĕн Çутĕç Халăх Комиссариачĕ тата унăн вырăнсенчи органĕсем, çавăн пекех тата ĕççынни депутачĕсен район, хула тата ял Совечĕсен исполкомĕсем ашшĕ-амăшĕсемсĕр тăрса юлнă ачасене пурне те вырнаçтарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемен. Çавăн пекех тата тăлăха юлнă ачасене усрама парса, вĕсене усракансене колхозсенчи пулăшу кассисем урлă укçа е ытти япаласем парса тăрас ĕçе социальнăй обеспечени органĕсем начар туса пыраççĕ. Çак ĕç Канаш, Октябрьски, Шăмăршă районĕсенче уйрăмах начар пырать. Çак ĕç валли уйăрса хунă укçапа усă курмаççĕ, учрежденисем ачасене пăхма илес ĕçе туса пымаççĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Йĕпреç, Шăмăршă, Кувакино район Совечĕсен исполкомĕсем, çав районсенче çул çитнĕ ачасем шкула çӳременнисем пур пулин те, вĕсене шкула çӳреттерес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнмаççĕ. вĕренекенсем валли ăшă япаласем пухас тата ирхи вĕри апат пĕçерме продуктсемпе кирлĕ япаласем хатĕрлес ĕç çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ. Ишлей, Октябрьски районсенче фронтовиксен çемьисен кушисене тиресетерес ĕç çине чухсăррăн пăхнисем пулнă.

Социальнăй обеспечени органĕсем Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене вĕрентес ĕçе питĕ начар туса пыраççĕ, çак ĕç валли бюджетран пама палăртнă укçан 43 процентчĕпе çеç усă курнă.

Чăваш АССР-ĕн Совнаркомĕ çумĕнчи çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отдел çар çыннисен çемьисен пурнăçне лайăхлатмалли ĕçсене мĕнле пурнăçа кĕртнине çителĕклĕ контролĕлесе тăман.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ çапла йышăнать:

1. Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пособисемпе пенсисем памалла тăвас тата вĕсене вăхăтра парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ĕçне лайăхлатмалла, пособисемпе пенсисене вăхăтра яман çынсем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла;

б) Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшса тăрас тĕлĕшпе совет, общество тата хуçалăх организацийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла, çак ĕçе чĕрене хыйман çынсемпе, бюрократсемпе кĕрешмелле. Ĕçе çакăн пек йĕркелесе пымалла: кашни фронтовикпа инвалидăн çемьине уйрăмăн шута илмелле, вĕсене мĕнне тата мĕнле пулăшмалли паллă пулса тăтăр;

в) Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене памалли укçапа пурлăха тĕрĕс те усăллă расходламалла тата мĕнле ĕç валли расходлама палăртнă—çав ĕç валли расходламалла чи малтан, тăлăха юлнă ачасене тата чи начар пурăнакан çынсене пулăшмалли вырăнсенче вĕсене пулăшмалли майсем шырса тупмалла;

г) Çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене государствăна налогсем тӳлес тата ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе закона кăтартса панă çăмăллăхсене памалла;

д) Вĕсем валли вутă хатĕрлесе турттарса, хĕл валли çуртĕсене юсаса парас, апат-çимĕç фончĕсем туса хурас ĕçсене организацилемелле;

е) Çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшас тата ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем тавра тата социальнăй обеспечени отделĕсем тавра Советсен депутачĕсенчен, яланхи комиссисен членĕсенчен, интеллигенци представителĕсенчен анлă актив тумалла;

ж) Тăлăха юлнă ачасене ĕççыннисен çемьисене усрава памалли çамрăк ачасене пăхма çын çирĕплетмелле, колхозсенче ача çуртĕсем тумалла.

2. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене государство енчен пулăшас тата вĕсен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене Халăх Комиссариачĕсем, республика организацийĕсемпе учрежденийĕсем тата вырăнти Советсем мĕнле пурнăçласа пынине ялан тĕрĕслесе тăма хушас. Çав çемьесен ыйтăвĕсене вăхăтра тата конкретлă татса паччăр, пособисемпе пенсисем вăхăтра парса тăччăр, вĕсене кирлĕ çăмăллăхсем паччăр тата ĕçе вырнаçтарччăр, çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас ыйтусене учрежденисен руководителĕсем хăйсем пăхса тухчăр.

3. Чăваш АССР-ĕн Çутĕç Халăх Комиссариатне (Макаров юлташа), ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполкомĕсене фронтовиксен шкула çӳреме çул çитнĕ пур ачисене те вĕренӳе явăçтарма хушас тата вĕренӳ вăхăтĕнче вĕренекенсем шкултан пăрахса каймалла мар тăвас тĕлĕшпе вăхăтра мерăсем йышăнма хушас; малта пыракансен примерĕне, шкулсенче ирхи вĕри апат пĕçермелле, интернатсем тумалла, вĕренекенсене бюджета кĕмен укçаран стипендисем памалла. Ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсен исполкомĕсен, вырăнти майсемпе усă курса, чи начар пурăнакан ачасене пурне те тумтир тата ата-пушмак тупса памалла.

4. Чăваш АССР-ĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариатне тата Чăвашсоюза çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене кирлĕ япаласем вăхăтра тата йĕркеллĕ парса тăма хушас; çав çемьесем валли уйăрса хуракан фондсемпе тĕрĕс усă курнине, вырăнсенче тăвакан куллен кирлĕ таварсене ытларах сутассине, таварсем панă чухне çав çемьесене чи малтан памалла тăвассине хытă контроллесе тămalla.

5. Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссариатне (Воронцова юлташа) Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, вĕсен сывлăхĕ ĕçлеме май парать пулсан, ялхуçалăхне, промышленноçа тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслисене вырнаçтарма хушас, вĕсене вĕрентме уйăрса паракан укçапа пĕтĕмпех усă курма тата вĕсем валли тăвакан протезсене тĕпренех лайăхлатма хушас.

6. Чăваш АССР-ĕн Социальнăй Обеспечени Халăх Комиссариатне (Воронцова юлташа), Çĕрĕç Халăх Комиссариатне (Малов юлташа) çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, ялсенче пурăнаканнисене, колхозсенчи пулăшу кассисем урлă пулăшас тата колхозсенче çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшмалли фондсем туса пулăшас ĕçе лайăхлатма хушас, çав фондсене ялхуçалăх артелĕн уставĕнче кăтартнинчен кая мар тумалла.

7. Чăваш АССР-ĕн Вырăнти Промышленность Халăх Комиссарне Егоров юлташа, РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкооперации Управленийĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйне Степанов юлташа тата Чăвашкоопинсоюз председательне Шадрин юлташа çар çыннисен çемьисен куллен кирлĕ япалисене юсакан мастерскойсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма, продукци пахалăхне хăпартма, республикăри сăран ата-пушмак тумалли чĕртаварсемпе (планран ытлашши ресурссемпе) пуринпе те усă курма хушас.

8. Халăх Комиссариачĕсене, республикăн учрежденийĕсемпе организацийĕсене, ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсен исполкомĕсене фронтовиксен, вĕсен çемьисен тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен жалобисемпе заявленийĕсене вăхăтра пăхса тухма тата вăхăтра татса пама хушас.

9. Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отдела çар çыннисен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшмашкăн вырăнсенче майсем тупас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе учрежденисен, организацисен, предприятисен руководителĕсем тата хула, район Совечĕсен исполкомĕсен отделĕсем мĕнле ĕçленине хытăрах контроллесе тăма хушас.

* * *

Чăваш АССР-ĕн Верховный Совечĕ ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсен исполкомĕсене çакăн пирки асăрхаттарать: фронтовиксен çемьисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене ăшшăн та тимлĕн пăхасси, вĕсен нушисене тулнирех тивĕçтерме тăрăшасси совет органĕсен ĕçĕнчи çирĕп закон пулса тăрать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ çакна шанса тăрать: ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсен исполкомĕсем, мĕнпур ĕççыннисен вăйне фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăн аркатса тăкас сехете çывхартма мобилизацилесе, фронтовиксен çемьисемшĕн тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемшĕн пĕтĕм халăх тăрăшас ĕçе тĕпренех лайăхлатĕç.

А. Я. Вышинский юлташ Румынин премьер-министрĕн заместительне Грозана йышăнни

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ Румынин премьер-министрĕн заместительне П. Грозана йышăннă. Вăл укпа нумайччен калаçнă.

Ют çĕршывсенче

НЬЮ-ЙОРК ХУЛИНЧИ МИТИНГА ПУХАННА ХАЛĂХА РУЗВЕЛЬТ САЛАМЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра Мэдисон-Сквер-Гарденра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕ хушшинче дипломатиллĕ çыхăну пуçланса кайни 11 çул тултарнă ятпа митинг пулса иртнĕ. Митингри халăха президент Рузвельт салам янă. Çавăнпа пĕрлех президент Рузвельт çав ятпа тата Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă ятпа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче нумай хуласенче пухăннă митингсенчи халăха та саламланă.

Мэдисон-Сквер-Гарденра пулса иртнĕ митинг председателĕ ячĕпе Америкăн Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă Дэвис ячĕпе янă саламра Рузвельт çапла çырнă: «Хамăр союзниксене çакăнтан ытла нимĕнле майпа та тав тума çук; çак май вăл пĕрпĕринпе ытларах та ытларах килĕштерсе ĕçленĕ условисенче çирĕп мир тăвас пирки малалла ĕçлесси пулса тăрать. Думбартон-Оксра пулса иртнĕ конференци çак енĕпе самаях пысăк утăм турĕ. Çавăн пекех тата ытти утăмсем те тăвăпăр. Çав тĕллеве астуса тăрсан, паян Мэдисон-Сквер-Гарденра пухăннă митинг тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен чи пысăк хулисенче пулса иртекен ытти митингсем те питĕ усăллă тата çав тери хаклă пулса тăраççĕ».

ФИНЛЯНДИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Финлянди президенчĕ Маннергейм ноябрĕн 17-мĕшĕнче кивĕ правительство вырăнтан тухнине йышăннă. Финляндин çĕнĕ правительствине çирĕплетнĕ. Çĕнĕ правительство пуçĕнче Паасикиви тăрать. Правительствăра çаксем тăраççĕ: портфельсĕр министр Пеккало (социал-демократ), оборона министрĕ Вальден, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Энкель, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Рейгольд Свенто (социал-демократ), шалти ĕçсен министрĕ Хиллиля, çĕрĕç министрĕ Лукка (аграрнăй парти), çутĕç министрĕ Такки (социал-демократ), финанс министрĕ Хело («ултă çын ушкăнне» çывăх тăрать), финанс министрĕн заместителĕ Туомиоя (прогресивнăй парти), суту-илӳпе промышленность министрĕ Гартц (шведсен халăх партийĕ), снабжени министрĕ Ютила (аграрнăй парти), снабжени министрĕн заместителĕ Аура (социал-деморат), çулйĕрсен тата обществăллă ĕçсен министрĕ Вуори (социал-демократ), çулйĕрсен тата обществăллă ĕçсен министрĕн заместителĕ Фильгунен (социал-демократ), социальнăй обеспечени министрĕ Ральф Густав Торнгрен (шведсен халăх партийĕ), социальнăй обеспечени министрĕн заместителĕ Лейно (коммунист), юстици министрĕ Урхо Кекконен (аграрнăй парти).

БЕЛЬГИРЕ ХИРĔÇ ТĂРАКАН ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ХĔÇПĂШАЛСĂРЛАТМА ЙЫШĂННА ПИРКИ ПРОТЕСЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Бельгири радио оборона министрĕ Деметс кĕнсе калани панă. Деметс çапла каланă: хирĕç тăракан организацисен членĕсене хăйсен хĕçпăшалĕсене ноябрĕн 18-мĕшĕнчен кая юлмасăр пама хушакан приказ кăларма мана полномочи панă, тенĕ. Деметс çапла асăрхаттарнă: хирĕç тăракан организацисен деятелĕсенчен кам та пулин урăхла приказ парсан, ăна, вăл кирек мĕнле чинра тăрать пулсан та, ответ тыттараççĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Брюсельри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, правительство хирĕç тăракан организацисене ноябрĕн 18-мĕшĕнчен салатса яма йышăннине Бельги премьер-министрĕ Пьерло çирĕплетсе панă. Хирĕç тăракан организацисен хĕçпăшаллă чаçĕсене хăшне-пĕрне çеç яланхи çар шутне кĕртсе, ытти чаçĕсене пурне те салатса яма йышăннă пирки пĕтĕм çĕршывĕпех протесленĕ. Çак правительствăна çĕнĕ кризиса кĕртсе янă. Правительство членĕсем паян çĕршыври лару-тăру çинчен сӳтсе-явма пухăннă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче Кăнтăр-хĕвелтухăç Голландире союзниксен çарĕсем Маас шывĕ еннелле наступлени туса пынă. Тăшман вăйлă хирĕç тăман. Союзниксен çарĕсем Вессем хулине тытса илнĕ, халь вĕсем Рурмонд хулинчен пĕр мильăра тăраççĕ. Унтан виçĕ миля çурçĕртерехре Брюгген хулине тытса илнĕ. Ноордер каналĕнчен кăнтăртарахра кĕрешекен союзниксен çарĕсем Мейель хулине йышăннă çарсемпе пĕрлешнĕ.

Аахен районĕнчи Гейленкирхен секторĕнче союзниксен чаçĕсем наступлени пуçласа янă, темиçе пин ярд малалла кайнă, Фловерихха тата Иммендорфа кĕрсе кайнă.

1.200 йывăр бомбардировщик, 480 истребитель хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Дюрен — Эштвейлер районĕнчи (Германи) тĕреклетнĕ пункчĕсене, хир батарейисене тата зениттăй тупписсене тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ (унта 1.150 бомбардировщик пулнă, вĕсене 250 истребитель хӳтĕлесе пынă) Дюрен хулине тата Юлих, Гейнсберг ятлă пунктсене тапăннă, çак пунктсем тăшман тылĕнче фронт çывăхĕнчех лараççĕ.

Бельфор патне пымалли вырăнсенче союзниксем çаплах наступлени туса пыраççĕ. Дуб шывĕнчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра темиçе хулана йышăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 8-мĕш арми чаçĕсем Форли хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. 5-мĕш армин сылтăм флангĕнче Англипе Инди чаçĕсем çулсен паха узелĕ пулса тăракан Модильяна пунктне йышăннă. Унтан хĕвеланăçнерехре 5-мĕш армин Америка чаçĕсем Серкьо шывĕн улăхĕнче пĕр миля ытларах малалла кайнă.

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Кăнтăр Германири, Австрири тата Çурçĕр Италири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Союзниксен самолечĕсем Югославире нимĕçсен тĕрлĕ вырăнта пухăнса тăнă çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 2.400 вĕçеве яхăн тунă.

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ ФРАНКО ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат хăйĕн редакци çырнă статьинче Франко çинчен çапла çырать: «Англи халăхĕ Франкона яланах демократин вак, анчах та вăхăтлăха вăйлă тăшманĕ тесе шутланă, ăна сутăнчăк, хăйĕн çĕршывĕнчи çынсене вĕлерекен тата Гитлерпа пĕрле ĕçлекен çын тесе шутланă».

«Нью кроникл» хаçат редакци çырнă статьяра çапла калать: государство министрĕ Лоу общинăсен палатинче калани пурте питĕ савăнса йышăнĕç, Лоу вăл пурте ăнланмалла çапла каларĕ: Испани правительствипе ытти правительствăсем союзниксен ĕçне кая юлса хутшăнма хăтланни Англи правительствине пĕрех те кирлĕ мар, тенĕ. Франкопа çыхăнса тăни кăтартуллă пулса тăрать. Унăн тиранла хаяр режимĕ Гитлерпа Муссолинине çул уçса панă. Халĕ Гитлерпа Муссолини поражени тӳснĕ вăхăтра Франко, икĕ питленсе, демократие кăмăлланă пек кăтартма хăтланать. Ăна халь тивĕçлипе сирсе янă.

Хăватлă совет артиллерийĕ

Хĕрлĕ Çарăн артиллерийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунине шута илсе, Совет правительстви çулсерен ноябрĕн 19-мĕшĕнче ирттермелли праçник — «Артиллери кунĕ» турĕ. Совет Çарĕсем 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче Сталинград патĕнче наступлени пуçарса ячĕç. Çав наступленире нимĕçсен 22 дивизине хупăрласа илсе пĕтерсе тăкрĕç, вăл пĕтĕм Отечественнăй вăрçăн ĕçĕсем урăхла май улшăнса кайнă вăхăт пулчĕ. Сталинград патĕнчи çапăçу совет артиллерин хăватне питех усăмлăн кăтартса пачĕ. Совет артиллеристчĕсен мухтавлă ĕçĕсем пирĕн пĕтĕм çĕршыва тулли кăмăлпа савăнтараççĕ. Вĕсен ĕçне ют çĕршывсенче те пысăка хурса хаклаççĕ. Пирĕн артиллерин вăйĕне хăватне тăшман та йышăнать.

Совет артиллерийĕ вырăссен ĕлĕкхи артиллерин мухтавне малалла çĕклесе пыракан пулса тăчĕ. Вырăссен артиллерийĕ нумай ĕмĕрсем каялла мухтава тухнă. Пуриншĕн те паллă событисем, сăмахран, Полтава патĕнчи çапăçу, çичĕ çул хушши пынă вăрçăра пруссаксене Кунерсдорф патĕнче аркатса тăкни, Бородино патĕнчи çапăçу, Севастополе паттăррăн хӳтĕлени,— çаксем пурте вырăс артиллеристчĕсен ăста ĕçĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Граждан вăрçин çулĕсенче те артиллери паллă вырăн йышăнчĕ. Вăл хисеп тата боеприпассем тĕлĕшĕнчен тăшмантан кайра тăнă пулин те, интервентсемпе белогвардеецсене йывăр çухатусем тӳстернĕ. Царицына паттăррăн хӳтĕлени çавна усăмлăн кăтартса парать.

Совет артиллерине аталантарса пымалли база вăл—Совет Союзĕн хăватлă индустрийĕ пулса тăчĕ. Артиллери вооруженийĕпе боеприпассем туса кăларасси сталинла пятилеткăсем вăхăтĕнче вăйлăн ӳссе пынă. Производствăна хăвăрт ӳстерсе ямалли условисем туса хунă. Çакă вăл нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçă кумĕсенче питĕ пысăк вырăн йышăнчĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем тата оборона завочĕсен строителĕсем халиччен пулман вăрçă условийĕсенче ĕç паттăрлăхĕн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Артиллерин нумай тĕрлĕ вооруженийĕсемпе боеприпасĕсене туса кăларасси пĕрмаях ӳссе пычĕ, фронт ыйтăвĕсене ытлăн-çитлĕн тивĕçтерсе пычĕ.

Парти тата Сталин юлташ ывăлма пĕлмесĕр тимлĕн тăрăшнине пула, конструкторсен пысăк квалификациллĕ кадрĕсене хатĕрленĕ. Хăватлă тупăсем тăвакансен, Социализмлă Ĕç Геройĕсен—Грабин, Петров, Иванов тата ытти юлташсен ячĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлет. Сталин юлташ артиллерие лайăхлатса пырас шухăш мĕнле аталанса пынине куллен тишкерсе тăрать, конструкторсене техникăллă çĕнĕ шухăшсем парать, артиллерин çĕнĕ йышши системи çуралнине хăй сăнаса тăрать. Çаксене пула совет артиллерийĕ ют çĕршывсен артиллерийĕпе танлашрĕ кăна мар, вĕсенчен таксăнах иртсе кайрĕ. Артиллери кадрĕсене, уйрăмăнах офицерсен составне, хатĕрлес ĕç çине те яланах тимлĕн çавăрăнса пăхнă.

Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе тунă çĕнтерӳсене нумай тĕрлĕ çарсен, çав шутра артиллерин вырăнне тĕрĕс палăртса паракан вăрçă доктринисĕр тума май пулман. Пуриншĕн те паллă, вăрçă умĕнхи çулсенче Европăри хăшпĕр теоретиксем вăрçăра авиацие танксем тĕп вырăн йышăнаççĕ, пехотăпа артиллери иккĕмĕш вырăнта пулаççĕ, тесе каларĕç. Нимĕç фашисчĕсем, çав çулпа пырса, пуринчен те ытларах хăйсен танкĕсемпе авиацийĕ çине шанчĕç. Гитлерăн верховнăй командованийĕн чи пысăк йăнăшĕсенчен пĕри вăл артиллерие тивĕçлипе хакламанни пулса тăрать.

Советсен çар доктрининче çавăн пек йăнăшсем пулмарĕç. Вăл Сталин юлташ хальхи вăрçа тĕрĕс хакласа панине шута илсе ӳсрĕ тата пур тĕрлĕ çарсене те тивĕçлипе хакларĕ. Артиллери пирки калас пулсан, унăн пĕлтерĕшне фашистла Германи Совет Союзне тапăннинчен нумай малтанах Сталин юлташ çапла каласа палăртнă: «Артиллери — вăрçă турри», тенĕ вăл.

Пирĕн артиллери вăрçă пуçламăшĕнчи, тăшманăн хăшпĕр йышши хĕçпăшалсем, вăл шутра танксем, нумайрах пулнă вăхăтри чи йывăр тĕрĕслеве чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Нимĕç çарĕ вăрçăн пур паллă тапхăрĕсенче те танксем тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳсрĕ. 1941 çулта Мускав çине нимĕçсен 13 танковăй дивизийĕ тапăнса пынă. Хĕрлĕ Çар 25 кун хушши пынă хаяр çапăçура фашистсен 1.500 танкне пĕтерсе тăкрĕ. Сталинград патĕнчи çапăçура та нимĕçсем темиçе пин машина çухатрĕç.

Нимĕçсем 1943 çулхи июль уйăхĕнче Орелпа Белгород районĕсенчен «татăклă» наступлени пуçарнă чухне те тăшманăн питĕ йышлă бронетанковăй вăйĕсем пирĕн позицисем çине урса кайсах тапăнчĕç. Атакăсене çĕнĕ йышши «тигр» текен йывăр танксем тата «фердинандсем» хутшăнчĕç. Асăннă машинăсен питех те вăйлă хĕçпăшал пулнă. анчах та совет артиллерийĕ вĕсенчен вăйлăрах пулчĕ. Хĕрлĕ Çар Курск патĕнче оборонăра тăрса çапăçнă вăхăтра нимĕçсем 2.900 танк ытла çухатрĕç, анчах та нимĕнле ӳсĕм те тăваймарĕç, часах хăйсем оборонăра тăрса çапăçма пуçларĕç.

Вăрçăн виçĕ çулталăкĕ хушшинче нимĕç çарĕ Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче 70.000 танк таран çухатрĕ. Çакă вăл нимĕçсен танковăй дивизийĕсенчен нумайĕшĕсене темиçе хутчен пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнине пĕлтерет. Тăшмана тӳстернĕ çухатусен пысăк пайĕ—мухтавлă артиллери ĕçĕ пулнă.

Нимĕç танкĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте совет артиллеристчĕсен чаплă пахалăхĕсем: чăтăмлăхпа хăюлăх, хастарлăхпа паттăрлăх, тӳрĕ пеме пĕлни тата юлашки снаряд юличчен кĕрешме пултарни палăрчĕ. Совет артиллеристчĕсене çавăн пек пахалăхсене туянма Хĕрлĕ Çарти парторганизацисем тата офицерсем пулăшнă.

Совет артиллерийĕ гитлерла çарăн артиллерийĕпе те ăнăçлăн кĕрешет. Пирĕн артиллеристсем, авиаципе тата разведкăпа усă курса, тăшманăн батарейисем ăçта вырнаçнине тĕрĕс палăртаççĕ те вĕсем çине кĕтмен çĕртен пеме пуçлаççĕ. Çавăн пек чухне вара нимĕç артиллерийĕ яланах пысăк çухатусем тӳсет, е пачах та пеме чарăнать.

Хĕрлĕ Çарта артиллерипе, пĕр вăхăтрах хăватлăн персе тăмалли майпа усă кураççĕ. Ку вăл пур тĕрлĕ çапăçусенче те лайăх результатсем парать. Уйрăмăнах вăл наступлени вăхăтĕнче тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона линине татса кĕнĕ чухне пысăк усă парать. Хĕрлĕ Çар 1942 çулхи кĕркуннерен пуçласа наступлениллĕ нумай паха операцисем туса ирттерчĕ. Вăл операцисем пур чухне те çирĕплетнĕ вырăнсене татса кĕнинчен пуçланнă. Çавăнта вара артиллери яланах паллă вырăнта пулнă.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче артиллерирен пĕр харăссăн персе тăмалли майпа питех те чаплăн усă курнă операцисенчен пĕри вăл нимĕçсене Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе тунă операци пулать. Нимĕçсен оборонине татса кĕме ятарласа артиллери ушкăнĕ тунă. Вăл фронтăн кашни километрне 300 туппа яхăн вырнаçтарса тухнă. Каярахпа вара артиллерие çавăн чухлĕ пухса тăратасси Хĕрлĕ Çарăн наступлениллĕ пур операцийĕсенче те ĕçе кĕнĕ. 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсен группировкин флангĕсенче вырнаçтарнă совет артиллерийĕ чăтма çук хăватлăн пеме пуçланă. Çапăçу хирĕнче темиçе сехет хушши вутçулăм кĕрлесе тăнă. Артиллерирен вăйлăн пенипе нимĕç çарĕсене пусарса лартнă. Артиллери хăватлăн пенипе нимĕç çарĕсем çапăçăван пирвайхи кунĕнчех 9.000 çын ытла çухатнă. Çав кун нимĕçсен 196 блиндажне, 126 дзотне, артиллерин 100 батарейине, миномётсен 60 батарейине пĕтерсе тăкнă.

Каярахпа Хĕрлĕ Çар нимĕçсен Миус шывĕ тăрăхĕнчи, Ленинград патĕнчи, Карели перешеекĕнчи, Перекопри, Севастополь патĕнчи тата, юлашкинчен, Хĕвелтухăç Пруссири оборонине аркатрĕ. Пур операцисенче те артиллерирен вăйлăн персе тăни, авиаци хăватлăн пыра-пыра çапнипе пĕрле, тăшманăн фронтне наступлени малтанхи кунĕсенчех татса кĕме май панă. Тăшман оборонине татса кĕнĕ хыççăн артиллери ĕçĕ тата ӳсет. Наступлени малалла аталантарса пынă чухне артиллери тăшман вырнаçнă çĕре персе тăрать, пехотăна малалла куçма кансĕрлекен чăрмавсене пĕтĕмпех пĕтерсе пырать.

Отечественнăй вăрçă тапхăрĕнче совет артиллерийĕ танксемпе таччăн çыхăнса тăрассине йĕркелерĕ. Танксем тăшман оборонине татнă çĕре кĕрсе кайнă чухне вĕсене артиллери пулăшать. Вăл танксене кансĕрлекен чăрмавсене пĕтерсе пырать, нимĕç танкĕсен контратакисене сирсе пырать, хамăрăн танксем валли операцисем анлăн тума май паракан вырăна тухма çул уçса пырать.

Хăшпĕр чухне пирĕн танксем пĕр чарăнмасăр 80—100 километр таран каяççĕ. Çавăн пек чухне те артиллери танксем хыççăнах пырать, мĕншĕн тесен артиллерие турттарса çӳрессине лайăх механизацилене. Çакă вăл артиллерие вырăнтан вырăна хăвăрт куçарма май парать. Белоруссире, çавăн пекех Яссыпа Кишинев патĕнче пулнă çапăçусенче, совет танкисчĕсем, артиллери пулăшнипе, тăшманăн çулйĕрсем çине хăюллăн пыра-пыра тухнă, тăшман çарĕсен пысăк ушкăнĕсене савăра-савăра илнĕ.

Совет артиллерийĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçăра калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл пирĕн çĕнтерӳ ĕçĕнче, хамăр Тăван çĕршыва захватчиксенчен тасатас ĕçре питĕ пысăк усă пачĕ ĕнтĕ. Халĕ, тăшмана хамăр Тăван çĕршывран пĕтĕмпех хăваласа кăларнă хыççăн, совет артиллерийĕ Хĕрлĕ Çарăн пур тĕрлĕ войскисемпе таччăн çыхăнса пырса, фашистла тискер кайăка хăйĕн йăвинчех пĕтерсе тăкмаллах татăклăн пырса çапма тивĕçлĕ.

«Артиллери кунĕ» — Хĕрлĕ Çар артиллерийĕн чаплă çĕнтерĕвĕсене пĕтĕм халăх пысăка хурса хакланине кăтартать. Правительство, парти тата пĕтĕм çĕршыв тимлĕн тăрăшни совет артиллеристчĕсене Тăван çĕршывшăн çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар воинĕсем умне лартнă задачăсем чыслăн пурнăçа кĕрĕç.

И. ПРОЧКО.
Артиллери генерал-лейтенанчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçа пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00799 Типографи № 1, Управлени полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.